24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ОКТЯБРЬ
28
ЫТЛАРИКУН
254 (5969) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Можайск, Мало-Ярославец, Таганрог тата Макеевка (Донбасс) енĕсенче çапăçусем туса пынă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, октябрĕн 24-мĕшĕнче немĕçсен 35 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет пĕтнĕ.

Тĕплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, октябрĕн 23-мĕшĕнче немĕçсенне малтан кăтартса панă пек 10 самолет мар, 32 самолет персе антарнă.

Тĕплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, октябрĕн 24-мĕшĕнче Мускав çывăхĕнче немĕçсенне малтан кăтартса панă пек 17 самолет мар, 20 самолет персе антарнă.

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Мускав çывăхĕнче немĕçсен 14 самолетне персе антарнă.

* * *

Нуша сиккелет, нуша ташлать

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче октябрĕн 23-мĕшĕнче немĕçсем, хăйсен танкĕсен пысăк колонни наступлени туса пынă пек туса кăтартас тесе, танксен йывăçран тунă макечĕсене кăкарса турттарса пынă. Немĕçсен фашистла войскисем ăнсăртран мар ĕнтĕ çавнашкал чеелеççĕ. Хĕвелтухăç фронтĕнче немĕçсен танксем питĕ нумай пĕтнĕ пирки тата Хĕрлĕ Çар фашистсене хирĕç çавтери çирĕп те вăйлăн çапăçса, оборонăна лайăх организацилеме пирки, фашистсен хăйсен танксем нумай пулин те, çавнашкал ултавлă майсемпе усă курма тивнĕ. Фашистсен çавнашкал ултавла хăтланăвĕсене пирĕн çассем вăхăтра сисĕç. Çавнашкал фокуссем туса фашистсем хăйсен вăйĕсене юриех пысăклатса кăтартаççăн тата пирĕн боецсен речĕсене пăтраштарасшăн. Фашистсем усă куракан çавнашкал майсем вĕсем—çавтериех кивелсе кайнăскерсем, тата лайăх пурнăçран мар ĕнтĕ гитлеровецсен çавнашкал ултавлă майсем шухăшласа кăларма тивет. Акă ĕнтĕ чăнах та, нуша сиккелет, нуша ташлать.

* * *

Пирĕн пĕр авиасоединени, Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекенскер, октябрĕн 24-мĕшĕнче немĕçсенне 47 танк, боеприпассем тиенĕ 160 автомашина тата тăшман пехотин икĕ батальонне пытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн танксен пĕр соединенийĕ, Орел енче çапăçаканскер, темиçе кун хушшинче противник пехотин икĕ полкне, 133 танк, 14 оруди, 35 противотанковăй тупă, нумай минометсемпе мотоциклсем, 15 тягача прицепсемпе тата расчетсемпе пĕрле, горючи тултарнă темиçе цистерна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăçакан пирĕн часссенчен пĕри противник наступлени тунине хирĕç çапăçса немĕçсен танкĕсемпе мотопехотин атакине сирсе пăрахнă. Часри боецсем, контратака пуçласа ярса, тăшманăн 28 танкне тата салтакĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Одесса облаçĕнче фашистла захватчиксен тылĕнче партизансен отрячĕсем паттăрлăн çапăçаççĕ. Пулă тытакан колхозăн председателĕ З. ялташ командир пулса ертсе пыракан партизансем отрячĕ октябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче çĕрле юханшыв тăрăх хăпарса румынсен продовольстви склачĕсем патне сывхарса çитнĕ. Часовойсене шăпăн вĕлернĕ те, партизансем виçĕ пысăк склада тивретсе янă. Пушара сӳтерме салтаксем темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах та партизансен пеме тытăнсанах румынсем йĕркерен тухсах тарма пуçланă. Складсем ним юлмиех çунса пĕтнĕ.

Тепĕр икĕ кунтан çав отрядах Д. юханшывĕ урлă каçмалли халь çеç юсаса çитернĕ кĕпер çине хăюллăн пырса тапăннă. Партизансен группи кĕпер патне шымалли вырăнсене сыхласа тăракан подразделени çине пеме пуçланă тата кĕперне сирпĕнтерсе янă.

И. ялташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăйĕн боевой ĕçĕсемпе чапа тухнă. Нумаях пулмасть çак отрядри ялануткăсен группи çĕрле тачанкăсем çинчен лагере вырнаçтарнă румынсен роти çине пулеметсемпе автоматсенчен пеме тапратнă. Салтаксемпе офицерсем хăраса ӳксе тарма тытăнă, анчах та партизансен ялануткисем вĕсене хăваласа çитсе тураса тăкнă. Çĕрлехи çапăçу вăхăтĕнче румынсен 60 çын вилнĕ тата 50 çынна яхăн аманнă. Партизансем тăшманăн икĕ минометне, боеприпассем тиенĕ виçĕ лавне, 4 пулеметне тата юсавлă винтовкисене 90 штука тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕсемпе вĕсен тăванĕсем пĕр-пĕрин патне яракан сырусем Германи çарĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче питĕ пысăк сухатусем тӳсни çинчен çирĕплетсе параççĕ. Тылран фронта тата фронтран тыла янă кашни сырурах вĕлернисемпе аманнисем çинчен сăмах пырать. Нимĕç салтакĕ Гельмут Шуберт хăйĕн паллакан унтер-офицерĕ патне çапла сырать: «Малтанхи кунсенех пирĕн çапăçăва кĕме тиврĕ. Иккĕмĕш взводра иккĕн вилнĕ тата аманнисем нумай». Ганс хăйĕн тусне çапла пĕлтерет: «Пирĕн вилнисем питĕ нумай. Граната ванчăкĕ пырса тивнипе ĕнер Фрице вилчĕ. Тăваттăшĕ аманчĕç. Пĕр вăхăтрах пирĕн взвод командирĕ пулнă лейтенант Бланк та вилчĕ. Лейтенант Шумфле аманчĕ. Иккĕмĕш взводра 13 çын вилнĕ, пĕрремĕш ротăри Вальтер Гейнц та вилнĕ. Беркрайс чирлесе вилчĕ». Пĕр-пĕрин патне çавнашкал сырса пĕлтернисем Германи тылĕнчен фронта та пĕр вĕçĕмех пыраççĕ. Элизабет хăйĕн упăшкине Эрнста çапла сырса пĕлтерет: «Фриц вĕсен дивизийĕнче питĕ пысăк сухатусем пулни çинчен тата вĕсене тыла илсе кайни çинчен сырса пĕлтернĕччĕ. Енер, акă, Герман вилни çинчен тата Пауль Филиппа Роберт Фишер аманни çинчен пĕлтерӳ çитрĕ. Шляхте Вилли те вилнĕ. Вăл килĕнче пулса та хурайман, ăна ĕçлев повинноçĕнчен тӳрех çар часне илсе кайнă пулнă». Ефрейтор Шозиф Штотцель патне çапла сырраççĕ: «Шниплер вилни çинчен ĕнер пĕлтерӳ çитрĕ. Вăл танксен отрядĕнче пулнă». Вальтер ефрейтор патне унăн ашшĕ çапла сырать: «Пирĕн хуларан кайнисем хушшинче вилнисем нумай: Вирбернтсен пĕри, Гейбенинг, Нагель ывăлĕсенчен пĕри тата Бух вилнĕ. Нумайăшĕсем çинчен официальнăй пĕлтерӳсем çукха». Амăшĕ хăйĕн Герберт ятлă ывăлĕ патне çапла сырса пĕлтерет: «Готфрид вилнĕ. Артур Зейфер йывăр аманнă». Унтер-офицер Герберт Альтус патне унăн арăмĕ çапла сырать: «Пенцигри госпиталь аманнисемпе тулли тулнă ларнă». Тормейер патне сыркă сырура та çавăн çинченех каланă: «Пирĕн кунта аманнисемпе вилнисем нумай, халлех акă амалнă салтаксене илсе килчĕç».

Октябрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Таганрог, Макеевка (Донбасс), Можайск тата Мало-Ярославец енĕсенче çапăçусем пынă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи секторсенчен пĕринче çапăçакан Милкадзе подполковникпа Михайлов майорăн часĕсем хăвăртăн тата вăйлăн пырса çапса фашистсене Г. пунктран хĕссе кăларнă, виçĕ тупă, 8 пулемет, темиçе миномет тата снарядсем нумай тытса илнĕ. Грибов командирăн часĕнчи боецсем немĕçсен 254-мĕш пехотнăй дивизин 484-мĕш полкĕнчи пĕр батальона çапса салатнă тата виçĕ оруди, 7 пулемет, тĕрлĕрен çар снаряженийĕсем нумай тытса илнĕ. Артиллеристсем персе противникăн минометсен 10 батарейине, пулеметсен 15 йăвине, 10 ДЗОТ-не тата йывăр артиллерин пĕр взводне пĕтерсе тăкнă. Çав секторта çапăçакан авиачăсем темиçе кун хушшинчех немĕçсен 80 танкне, пехотăна боеприпассем турттарса пыракан автомашинисене 100 пытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Сурçĕр-Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн пĕр батальон пĕр кун хушшинчех немĕçсен пехотин икĕ батальонĕн пилĕк хутчен тунă атакисене сире-сире янă. Çапăçу хирне противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çынна çити вилсе выртса юлнă.

* * *

Днепропетровск облаçĕнчи партизансен отрячĕсем фашистла ирсĕр валери разъездне аркатса тăкнă тата çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă. Октябрь уйăхĕнчи 15 кун хушшинче отряд мĕнпурĕ фашистла захватчиксене 100 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Фронта тата тыла питĕ те кирлĕ грузсене мĕнле те пулсан хăвăртрах илсе çитерессишĕн совет железнодорожникĕсем çине тăрсах кĕрешеççĕ. Сурçĕр-Донецк чугунçулĕн Семейкино станцинчи дежурный Рыбальченко ялташ кăмрăк турттарса каймалли маршрута задани тăрăх 6 сехет те 50 минутăра тиеттерес вырăнне 5 сехет те 30 минутăра тиеттернĕ. Чистиково станцинчи дежурный Костицкий ялташ тата поездсен составителĕ Гарасюта ялташ кăмрăк турттарса каймалли маршрутсене хăвăрт йĕркелесе срокчен 13—15 минута маларах ăсатаççĕ. Караганда чугунçулĕ çинчи кăмрăк турттармалли маршрутсене чылайăшне курьерла поездсен хăвăртлăхĕсемпе илсе çӳреççĕ. Караганда отделенинчи дежурный Кузьменко ялташ тата «Карагандауголь» трестĕнчи транспортсен цехĕн диспетчерĕ Новгородцев ялташ маршрутсем çине грузсем тиенĕ чухне пулакан простойсене чылаях чакарнă. 712-мĕш №-лĕ маршрута тиенĕ чухне простоя икĕ сехет чакарнă, 627-мĕш №-лĕ маршрута тиенĕ чухне—3 сехет чакарнă. Л. М. Каганович ячĕпе тăракан чугунçул çинчи Тавда станцинче ĕçлекенсен коллективĕ составсем çине тиес тĕлĕшпе государство панă 3-мĕш кварталти плана иртерсе тултарнă. Халĕ коллектив 4-мĕш квартал планне декабрĕн 20-мĕш тĕлне тултарассишĕн кĕрешет. Петропавловск станцинче Догодаев ялташ ертсе пынипе ĕçлекен диспетчерсен смени пушатас тата тиес тĕлĕшпе панă плана 150 процент тытла тултарать.

Октябрĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Можайск, Мало-Ярославец, Харьков тата Таганрог енĕсенче çапăçусем туса пынă. Хĕвеланăç фронтĕнчи тĕрлĕ участоксенче немĕçсем пирĕн позицисем çине темиçе хутчен те хаярран атакăланă. Немĕçсен фашистла войскисем атакисене пурне те сирсе пăрахнă, тăшмана пысăк сухатусем кӳнĕ.

Нумай кун хушши çапăçнă хыççăн пирĕн чассем Сталино хулинчен тухса кайнă, çав çапăçусенче немĕçсен 50 пин çынна çити вилнĕ тата аманнă, вĕсен 250 ытла танк, 170 ытла оруди, çар грузĕсем тиенĕ 1200 автомашина пĕтнĕ.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, Октябрĕн 25-мĕшĕнче немĕçсен 27 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн чассенчен пĕри октябрĕн 25-мĕшĕнче немĕçсен фашистла войскисем виçĕ хутчен тунă хаяр атакăсене сирсе янă. Касалапа часри боецсем контратака тунă та противника чылай сухатусем кӳнĕ. Çав çапăçусенче немĕçсен 32 танкне, тĕрлĕ калибрлă 11 орудине, минометсен 5 батарейине, вунпар станковăй тата ручной пулеметĕсене пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирне тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 900 çын ытла вилсе юлнă. Пирĕн часть трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиачăсенчен пĕри октябрĕн 25-мĕшĕнче немĕçсен 37 танкне, çар грузĕсем тиенĕ 230 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пехотине пĕр полк ытла пĕтерсе салатса янă.

* * *

Фронтăн Орел енче çапăçакан Куркин командирпа Сорокин комиссарăн часĕсенчи артиллеристсем противника пысăк сухатусем кӳнĕ. Артиллеристсем пĕр кун хушшинче противникăн командăй пунктне тата Кузнецово ялĕ патĕнчи переправăна пĕтерсе тăкнă, миометсен батарейине путарса лартнă.

Старший лейтенант Левкиевăн батарейи тăшманăн 6 танкне, пикировка тăвакан пĕр бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă тата фашистсен пехотин батальонне сапаласа янă. Политрук Мошковцевăн батарейи немĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Старший лейтенант Чугуновăн батарейи фашистсен батарейине çĕмĕрсе тăкнă тата боеприпассем усрамалли склада сирпĕнтерсе янă.

* * *

Винница облаçĕнчи партизансем фашистсен салтакĕсене ăнăçлăн пĕтерепĕтере пыраççĕ. Партизансен отрячĕн командирĕ, МТС директорĕ А. ялташ çапла пĕлтерет:

«Октябрĕн 3-мĕш. Немĕçсен 20 бандичĕ çĕр выртма чарăннă З. ялĕ çине çĕрле пырса тапăнтăмăр. Партизансен штыкĕнчен 20 çынран пĕри те хăтăлаймарĕ.

Октябрĕн 5-мĕш. Чугунçул линийĕ урлă каçмалли вырăна минăсем хурса тухрăмăр. Виçĕ вагон турпас пекех ванса пĕтрĕç. Фашистсене 70 çынраканая мар вĕлерсе пĕтертĕмĕр.

Октябрĕн 6-мĕш. Отрядри 2 боец засадăра пулса немĕçсен çăмăл машинисене çине пеме пуçланă, 3 офицера тата шоферне вĕлернĕ, машинине тата офицерсем çумĕнчи хĕçпăшалсене отрядăн штабне илсе килнĕ.

Октябрĕн 9-мĕш. Немĕçсем уйăрса лартнă староста кулак Иванченко хресченсене çаратни çинчен, чи лайăх çĕре хăйне валли тытса илни çинчен тата колхозниксене вăйпах хăйĕнпĕн ĕçлеттерни çинчен пĕр ялта пурăнакансем пире пĕлтерчĕç. Предателе тата ĕççыннисен тăшманне Иванченкона çĕрле персе вĕлертĕмĕр.

Октябрĕн 11-мĕш. Паян немĕçсен çарĕн продовольстви усракан складне çунтарса ятăмăр. Фашистсем пире йĕрлесе тытасшăн пулчĕç, анчах та вăрмана шалалла кĕмерĕç. Немĕçсен 13 салтакне вĕлертĕмĕр.

Октябрĕн 14-мĕш. Немĕçсен карательнăй отрячĕ çине тапăнтăмăр. Çапăçу сехете яхăн пычĕ. 15 салтака тата пĕр офицера вĕлертĕмĕр, икĕ грузовой машинăна, пĕр çăмăл машинăна, ручной пулемет, виçĕ автомат, 8 винтовка, икĕ пистолет тытса илтĕмĕр».

* * *

Пирĕн çĕршыври предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче фронт панă заданисене лайăхах пурнăçлассишĕн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту кунран-кунах сарăлса пырать. Вăрçă вăхăтĕнче пысăк хăвăртлăхпа ĕçлесе пымалли кулленхи графика Ленинградри машинăсем тăвакан заводра палăртса хунинчен чылай малаларах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Расточник Новиков ялташ 24 сехет хушши ĕçлесе 5 кунхи норма чухлĕ, пысăк пахалăхлă япаласем туса кăларнă. Токарь Полубояринов кашни сменăрах 4 кунхи нормăна тултарса пырать. Канмалли кун ĕçлесе, карусельщик Беляков ялташ хăйĕн станкĕпе ахаль чухне хинчен виçĕ хут нумайрах детальсем хатĕрленĕ. Токарь Москалев ялташ тата унăн сменинче ĕçлекен Кудрявцев ялташ, сменăра норма тăрăх 7 деталь тумалла пулсан, вĕсем 20 деталь туса кăлараççĕ. Çамрăк токарь Орлов ялташ хăйĕн нормине икĕ хут ирттерсе тултарать. Токарь Брусникин ялташ метала касас хăвăртлăха икĕ хут ӳстерсе, заданне 400 проц. тултарса пырать. Халĕ пĕтĕм участокра унăн меточĕпе ĕçлеççĕ.

Кузнецкри металлурги заводĕнчи изобретательсемпе рационализаторсем Октябрь праздникĕн 24-мĕш çулхи уявне çĕршывăн оборона фондне валли рационализаторла сĕнӳсем пухнипе паллă тума йышăннă. Рационализаторла 24 сĕнĕве халĕ производствăра пурнăçлама йышăннă та ĕнтĕ, çав сĕнӳсем завода валли 750 пин тенкĕ перекетлесе хăвараççĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 20-мĕшне çити вăхăтра оборона фондне валли 100 ытла сĕнӳ панă. Чистов, Шемяк тата Андреев ялташсен сĕнĕвĕсем 50 пин тенкĕ яхăн перекетлесе хăвараççĕ. Çав сĕнӳсемшĕн хăйсене тивĕçлĕ премисене рационализаторсем оборона фондне панă. Киргиз СС Республикинчи Фрунзе ячĕпе тăракан металлурги заводĕнче ĕçлекенсен коллективĕ металл шăратса кăларассин çулталăклăх планне срокченех тултарнă. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура смена мастерĕн Юлташевăн бригади пĕрремĕш вырăна тухнă. 1941 çул вĕçленĕ тĕле металлургсем плана 34 процент ирттерсе тултарма сăмах панă.

Октябрĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле ширĕн войскăсем Харьков, Таганрог, Можайск тата Мало-Ярославец енĕсенче çапăçусем туса пынă.

* * *

Харьков районĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр авиачасть юлашки виçĕ кун хушшинче немĕçсенне 28 танк, 12 противотанковăй оруди, 4 йывăр оруди, боеприпассемпе çар снаряженийĕ тиенĕ 100 автомашина пĕтерсе тăкнă. Бомбăсем пăрахса тата пулеметсенчен персе, тăшман пехотин пĕр батальонне çити пĕтернĕ.

* * *

Противникăн атакисене сире-сире ярса, пирĕн пĕр часть, Можайск енче кĕрешекенскер, немĕç пехотин икĕ полкне пысăк сухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирĕнче фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсен 500 вилли выртса юлнă. Танксене хирĕç чавса хунă лакăмсенче тата çул хĕррисенче немĕçсен çапса çĕмĕрнĕ тата çунтарнă 15 танкĕ тата 70 автомашина йăваланса выртаççĕ.

* * *

Немĕç фашисчĕсем Румынине çаратса пĕтернĕ, мĕнпур продовольствине Германи курьерĕсем тиеççĕ, машинине Венгри шоферĕсем вĕлерсе, Венгри территорине аркатаççĕ.

Малалли 4-мĕш страницăра

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕН

КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Тăшман Мускав патнелле талпăнать

ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧЕ. Хĕвеланăç фронтĕнче ĕнерхи кун хушшинче ларутăру йывăрланчĕ. Урса кайнă немĕçсем нимле сухатусем çине те пăхмасăçĕ, пирĕн оборона çине пĕтĕм фронтра тапăнаççĕ. Кăнтăрла пуличчен Рокоссовский ялташ боецĕсем немĕçсен атакине аркатса ячĕç. Атакăна 80 танк, нумай йышлă авиаци хутшăнчĕ. Рокоссовский ялташăн артиллерийĕнчи боецсем 40 танка çипи пĕтерсе тăкрĕç, тăшмана каялла ывăтса ячĕç. Вара тăшман тепĕр участокра ытларах хĕсме пуçларĕ, пирĕн чассем хăшпăнăçсене пуçларĕç, тăшман авиацийĕ темиçе хут пырса бомбăсем пăрахрĕ пулсан та, йышăннă рубежа çирĕппĕн тытса тăчĕç.

Фронтăн сылтăм хĕрринчи участокĕнче те çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн чассем хастарлăн хирĕç тăраççĕ. Фронтовиксем умĕнче тăракан задача: кирек мĕнле средствăсемпе те пулин противника хавшатса ăна чарса лартасси. Фронтовиксем хăйсем умĕнче тăракан задачăна пĕтĕмĕшпех ăнланкă, фронтовиксен пысăк пайĕ, советăн чаплă патриочĕсем, тăван çĕршыва çăлса хăварас ĕçри хăйсен тивĕçне тĕрĕс ăнланаççĕ. Танкистсен командирĕ майор Воденко çапăçура ултă танка хăй ертсе пынă. Противникăн йышĕ пирĕннисенчен нумай пулнă пулин те, çак çапăçура немĕçсенне 12 танк, 100 çити салтаксене пĕтерсе тăкнă. Немĕçсем вăйлăн пенĕ пулин те, танк командирĕ сержант Корчагин, ленинла комсомол воспитанникĕ, ним хăрамасăр мала сиксе тухса, немĕçсен 10 салтакне сывăхран персе пăрахнă. Лейтенант, комсомолец Быстров, Можайск патĕнче аманнă пулин те, хăйĕн боевой постне хăварман. Вăл ертсе пыракан танк экипажĕ пĕр çапăçура тăшманăн çичĕ огневой точкине, пĕр бронетанковăй тупăпне пĕтерсе тăкнă тата вунпар немĕçсене персе вĕлернĕ. Шевелев капитан хăйĕн танкĕсен группипе фашистсен полкĕсем хĕснине пит ăкăçлăн сирсе янă. Юлашки çапăçура Шевелев группи немĕçсенне 14 танк çунтарса янă, хăпне персе çĕмĕрнĕ. Кĕçĕн лейтенант Фаранов хăйĕн экипажĕпе Можайск патĕнче çак кунхи çапăçусенче немĕçсенне 9 танк пĕтернĕ. Вăл аманнă, анчах çапах та хăйĕн танкне çапăçу хирĕнчен чиперех илсе тухнă.

Мускавран инçетре пыракан çапăçусенче немĕçсем йывăр çухатусем тăваççĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕнче кăна пирĕн летчиксем 83 танк, 148 автомашина çĕмĕрнĕ тата пĕр батальона çити пехотăна пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, темиçе самолет персе антарнă, вĕсен тĕрĕс шутне халĕ палăртса çитермен-ха.

Çухатусем тунине пăхмасăр, фашистсем Мускав патнелле талпăнса пыраççĕ. Юлашки кунсем хушшинче Хĕвеланăç фронтне немĕçсем çĕнĕ вăйăсем илсе пынă, халь вĕсене те çапăçăва кĕртсе яраççĕ. Çакă вăл тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçĕн йывăрлăхне ӳстерет, анчах та кĕрешӳ йывăрлăхĕсем фронтовиксен чун хавалне татах та хĕрӳлетеççĕ, совет патриочĕсен вăй-халне татах та ӳстереççĕ. Уйрăм паникерсене, хăрав çăсене, хамăран халăх умĕнче хăйсен ятне, хăйсен тивĕçне çухатнă çав мĕнпур ирсĕрсене шута илместпĕр. Пирĕн фронтовиксен пĕтĕмĕшле масси — сталинла сирĕп çынсем. Вĕсем тăшмана ним шеллесе тăмасăр çапăçаççĕ, вĕсем кĕрешӳри паттăрлăх тĕлĕшпе те, политика енĕпе те ӳссех пыраççĕ. Пиншер фронтовиксем Ленинпа Сталин партине кĕме заявленисем пачĕç. Батарея командирĕ, орден илнĕ лейтенант Смирнов çапла сырать: «Тăван çĕршыв чапĕшĕн, кирлĕ пулсан, ним хăрамасăр вилĕп. Эпĕ çапăçăва коммунист пулса кĕрешшĕн». Совет Союз Геройĕ Любушкин партие илнĕ хыççăн, парти билечĕ илнĕ чух çапла каларĕ: «Тăшмана тата лайăхрах, тата витĕмлĕрех çĕмĕрме пулатăп». Матросов тăвансем, парти репне илнĕскерсем, çапла каларĕç: «Хамăран мĕнпур вăй-хала, пĕтĕм пĕлĕве, кирлĕ пулсан, пурнăçăмăра та парти ĕçĕшĕн, тăвак çĕршыв ĕçĕшĕн паратпăр эпир».

Тăшман Мускав патнелле талпăнса пырать. Столицăна хӳтлекен геройсен речĕсем ӳсеççĕ. Анчах та чи татăклă çапăçусем малта-ха.

В. СТАВСКИЙ.

Урамри çапăçусем

КАЛИНИН ЕНĔ, октябрĕн 25-мĕш. («Правда» хаçатăн военнăй корр.). Иртнĕ талăк хушшинче Калинин хули районĕнче кунĕн-çĕрĕн урамри çапăçусем пынă, кунта Хоменко командирăн часĕсем çапăçаççĕ. Горячев боецĕсем хулан сурçĕр-хĕвелтухăç пайне кĕрсе кайнă, унта урамсенче çапăçусем пыраççĕ. Противник тимлĕн хирĕç тăрать. Чулков боецĕсем иртнĕ çĕрле çĕрĕпех элеватора туртса илессишĕн çапăçнă. Пирĕн подразделенисем тăшманăн кунта пухнă вăйăсен хăшпĕр пайĕсене пĕтерсе тăкнă. Чулков часĕ элеватора ярса илессишĕн çапăçасси халь те пырать. Пирĕн авиаци çĕрле фашистсем йышăннă аэродром çине бомбăсем пăрахнă, аэродром çинче пысăк шуçарсем тухнă.

Хоменко командирăн часĕсем хаяр контратакăсем туса тăшмана чарса тăраççĕ. Калинин хулин районне тăшман моторизованнăй тата пехота вăйăсене нумай илсе килнĕ.

Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕ пĕлтерни

Мускав хулинче 1941 çулти октябрĕн 13-мĕшпе 15-мĕшсенче Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕн пĕрремĕш сессин ларăвĕсем пулса иртнĕ. Çак Комитетра ССР Союзĕнчи Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Советĕн тата Британири тред-юнионсен Конгресĕн представителĕсем тăраççĕ.

Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕ халăхи пĕтĕм тĕнчери обстановкăра ССР тата Англи профсоюзĕсем умĕнче тăракан питĕ те кирлĕ чылай проблемăсене пăхса тухнă. Англи тред-юнионĕсен тата Совет профсоюзĕсен делегацийĕсем Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕн тĕп задачисене пĕр шухăшлă пулса килĕппе палăртнă. Вăл задачăсем çаксем пулса тăраççĕ тесе йышăннă:

1. Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшу парас ĕçе организацилеме Великобритани тред-юнионĕсемпе Совет Союзĕнчи профсоюзсене пĕрлештермелле.

2. Гитлерла Германие çапса çĕмĕрессишĕн пĕрле кĕрешекен ССР тата Великобритани правительствисене пур майсемпе те пулăшса тăмалла.

3. Танксем, самолетсем, тупăсем, снарядсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем туса кăларассине май пур таран вăйлатса ярас тесе, икĕ çĕршывăн промышленноçри вăй-халĕсене çирĕплетсе пымалла.

4. Великобритани енчен Совет Союзне хĕçпăшалсем парса май пур тарансах пулăшас ĕçе пулăшса тăмалла.

5. Гитлеризма хирĕç кĕрешме агитацине пропаганда средствисемпе, — пичетпе, радиопа, кинопа, рабочисен собранийĕсемпе т. ыт. те,—пурнине те усă курмалла.

6. Гитлерла Германи оккупацине çĕршывсенчи халăхсене, гитлерла пусмăртан хăтăлассишĕн, хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн, хăйсен демократиллĕ ирĕклĕхне каллех туса хурассишĕн кĕрешекен халăхсене пур майсемпе те пулăшса тăмалла.

7. Англи тред-юнионĕсемпе Совет профсоюзĕсем пĕр-пĕрне пулăшса тăрас ĕçе тата пĕр-пĕрне пĕлтерсе тăрассине организацилемелле.

8. ССР тата Валликобритани профсоюзĕсен движенин представителĕсем ССР Союзĕн Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Британин тред-юнионĕсен Конгресĕ урлă пĕр-пĕринпе лично сыхăнса тăрас ĕçе çирĕплетсе ямалла.

Кунсăр пуçне, Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕн ларăвĕнче Британи тред-юнионĕсен Конгресĕ совет профсоюзĕсен представителĕсене Великобритание пыма чĕннине Совет делегацийĕ йышăннă. Вăл делегаци Британи халăхĕн гитлеризма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕпе паллашать тата совет халăхĕ нацистла Германие хирĕç туса пыракан кĕрешӳ çинчен Британи халăхне халаса кăтартать. Делегаци составĕ çинчен ССР Профсоюзĕсен Пĕтĕм Союзри Центральный Советĕн Президиумĕ çитес кунсенчех пăхса тухать.

Алă пуснă: ШВЕРНИК,
УОЛСТЕНКРОФТ,
ВАЛЬТЕР СИТРИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти активĕн районсенчи пухăвĕсем

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ

ÇĔМĔРЛЕ, октябрĕн 27-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Ĕнер парти активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Обкомĕн секкăрмĕш пленумĕн итогĕсене сӳтсе-явăрӗç. Ку ыйту тăрăх ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик уйрăмăнах партиллĕ-массăллă ĕçсене лайăх организацилени хуçалăхлă ĕçсене ăнăçлăн туса пыма пысăк пулăшу пани çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа чылай çĕрте ку ĕçе лайăх организацилени çинчен, çавăн пекех уйрăм районсенче ку ĕçе çителĕксĕр туса пыни çинчен уйрăм примерсем илсе кăтартрĕ. Çĕмĕрле райкомĕ те активистсем хушшинче çителĕксĕр ĕçленĕ, активсăр пухăвĕсем, канашлусем сахал иртнĕ, пуçламăш парторганизацисене кирлĕ пулăшăва çителĕклĕ парса пыман т. ыт. Районра парти ретне илессипе те ĕçсем çителĕксĕр пулса пынă. Кăçал вунтăвалă пуçламăш парторганизацисенче партине пĕр çынна та илмен. Пысăк организацисенче те (комбинат, «Большевик» завод) парти ретне пĕрер-икшер çынна кăна илнĕ.

Ахазов юлташ Çĕмĕрле районĕнче ялхуçалăх ĕçĕсем те хăшпĕр енĕпе кая юлса тăнине палларĕ турĕ. Çĕрулми çăларас, ăна государствăна парас, авăн çапас ĕçсем юлса пыраççĕ. Сăмахран, авăн çапассине октябрĕн 20-мĕшне 38 процент çеç шурăça кĕртнĕ.

Ахазов юлташ докладĕ тăрăх пренире 12 çын тухса каларĕ. Вĕсем те районра партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыни çинчен уйрăм примерсем илсе кăтартрĕ. Çĕмĕрле райкомĕ те активистсем хушшинче çителĕксĕр ĕçленĕ, активсăр пухăвĕсем, канашлусем сахал иртнĕ, пуçламăш парторганизацисене кирлĕ пулăшăва çителĕклĕ парса пыман т. ыт. Районра парти ретне илессипе те ĕçсем çителĕксĕр пулса пынă. Кăçал вунтăвалă пуçламăш парторганизацисенче партине пĕр çынна та илмен. Пысăк организацисенче те (комбинат, «Большевик» завод) парти ретне пĕрер-икшер çынна кăна илнĕ.

Ахазов юлташ Çĕмĕрле районĕнче ялхуçалăх ĕçĕсем те хăшпĕр енĕпе кая юлса пынине палларĕ турĕ. Çĕрулми çăларас, ăна государствăна парас

Хамăран пĕтĕм ĕçе вăрçă чухнехи çĕнĕ йĕркепе туса пырар!

„Комсомол“ колхоз хĕрӳллĕ ĕçре

Ку колхозра пĕтĕмпе те 25 хуçалăх, пĕр бригада, ĕçлеме пултаракансем 40 çын. Колхоз пысăк мар пулин те, ĕçĕсем тĕлĕнтерессĕ. Çак пĕчĕк колхозрах тавăрлă сĕт-çу, сурăх, чăх-чĕп фермисем пур. Нумаях пулмасть тата сыснă ферми организацилеме. Ĕçе тĕрĕç организацилеминпе пур ĕçсем те вăхăтра пулса пырассĕ. Уборка вăхăтĕнче М. Осипова, Е. Краснова, Т. Петрова, О. Круглова колхозницăсем кулленхи нормăна 150—160 процент таран тултарса ĕçленĕ. Нормăна тултарман колхозниксем пулман. Çапла вара колхоз уйри тырпулсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕнĕ

Хальхи вăхăтра, отечественнăй аслă вăрçă пынă тапхăрта, колхозри ĕç тухăçлăхĕ темиçе хут ӳсрĕ. Колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлесе татать. Сĕт-çу, аш-какай, çăм, çăмарта, тĕштырăсем памалли обязательствăсене тахçанах пурнăçланă. Колхозниксем хăйсен пархатарлă ĕçĕсемпе Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳсем тума пулăшассĕ. Сĕт-çу ферминче ĕçлекен дояркăсем Ефросия Степанова, Александра Васильева сĕт сăвассин çулталăкри планне 9 уйăх хушшинче 110 процент тултарнă. Çавнашкалах сурăх тата чăп-чĕп фермисенче ĕçлекенсем те хăйсен планлă заданийĕсене ытлашшипех тултарассĕ.

Ялта агитацине массăллă ĕçе те кирлĕ пек туса пырассĕ. М. Краснов (комсомол организацийĕн секретарĕ), Е. Фатеркин (колхоз счетоводĕ) юлташсем колхозниксене кашни кунах Совет Информаци Бюровĕ паракан сводкăсене вуласа ăнлантарассĕ, отечественнăй аслă вăрçăри боевой эпизодсем, фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсенчи ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пыни çинчен каласа парассĕ. Çаксем пĕтĕмпех колхоз производствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшассĕ.

Колхозлă ялăн çыннисем социализмлă тăван çĕршывăн оборона фондне тăвас, пăтăр Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе активлăн хутшăнассĕ. Колхоз оборона фондне 300 литр сĕт, 10 килограмм çăм, закупка шучĕпе 1050 литр сĕт панă. Колхозниксем 500 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса панă. Колхозри 25 хуçалăхран 24 хуçалăхĕ Хĕрлĕ Çарти боецсене валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе хутшăннă. Вĕсем 13 тир, 8 мăшăр алшиш, 129 килограмм çăм т. ыт. те панă. 55 çулхи Илья Пĕтрович боецсем валли 2 тир, оборона фондне 50 тенкĕлĕх заем облитацийĕ панă. Красноармеец арăмĕ Ефросия Ильина юлташ 2 тир, М. Осиповăпа А. Григорьева колхозницăсем çуршар килограмм çăм пачĕç.

Халĕ пĕтĕм совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем Октябрьти социализмлă аслă революци XXIV çул тултарнине ĕçри ăшă çитĕнӳсемпе кĕтсе илме ăмăртса ĕçлессĕ. «Комсомол» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем ку уява ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе тата государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнипе кĕтсе илессĕ.

НИК. ЦВЕТКОВ.

Çĕнĕ Етĕрне,
Етĕрне районĕ.

Колхоз фермисенче

Ку вăл кăçалхи март уйăхĕн 23-мĕшĕнче пулнă. Колхозниксем пурте правлени суртне пухăнса СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлении хĕрӳллĕн сӳтсе-явнă. Колхозниксем, бригадирсем, конюхсем тата фермăсенче ĕçлекенсем пĕрин хыççăн тепри туха-туха хăйсен шухăшĕсене каласа панă тата пĕр-пĕрне ăмăртăва чĕннĕ. Сĕт-çу фермин заведующийĕ Сабир Закиров юлташ кăçал сĕт-çу ферминчен 25 пин тенкĕ тупăш илме тата 40 пин литртан кая мар сĕт суса илме пулнă.

Пуху хупăннă хыççăн пурте хăйсен килĕсене саланнă. Сабир Закиров юлташ çеç правлени çурчĕ умне тăрса юлнă. Вăл хăй пуху умĕнче илнĕ обязательствăна пурнăçласси çинчен шутласа тăнă. «Обязательствине илтĕм-ха та, ăна пурнăçлас пулать вĕт. Пухура, пĕтĕм колхозниксем умĕнче ĕнентерсе калана сăмаха пурнăçламасан, вĕсем мана мĕн калĕç вара», тесе шутланă Закиров юлташ. Хамăр çине илнĕ обязательство çинчен фермăра ĕçлекен работниксемпе пĕрле пухăнса хăлех каласа пăхмалла, тенĕ вăл. Çапла вара, çурçĕр иртсен икĕ сехетрен, фермăра ĕçлекенсемпе пĕрле кĕске канашлу туса ирттерет. Çак канашлура фермăри палламалла доярка Гиннатуллина Рабига юлташ: «13 ĕнерен 13.800 литр сĕт суса илме пулатăп. Çакна эпĕ октябрь уйăхĕ тĕлне тултарса тепĕр 4 пин литр сĕт суса илме сăмах паратăп. Хампа ăмăртса ĕçлеме Идеатуллина Хазбие чĕнетĕп», тенĕ.

Идеатуллина юлташ, Рабига чĕнĕвне хăпăнса, планран ытлашши 3.500 литр сĕт суса илме пулнă.

Çаксем хыççăн сурăхсем пăхакан Ахматуллин Зариф юлташ сăмах илнĕ.

— Эпĕ те сынсенчен юлмастăп. 34 сурăхран кăçал 55 путек, 170 килограмм çăм касса илме сăмах паратăп, тенĕ.

Çакăнпа канашлу хупăннă. Фермăра ĕçлекен колхозницăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçлама пуçăннă.

Доярка Гиннатуллина Рабита юлташ фермăра чылайранпа ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ. Мĕнле майпа ытларах сĕт суса илессине те лайăх пĕлсе тăрать. Ĕнесене вăхăтра апат панă, вăхăтра шăварнă. Хĕллехи сивĕ кунсенче вăл ĕнесене ăшă шывпа шăварнă. Пахча-çимĕçсене çуса тасатмасăр тата пĕçермесĕр вылăхсене паман. Талăкра виçĕ хут сĕт сунă. Вылăхсене юратса пăхнă пирки вăл хĕллехи шартлама сивĕ кунсенче те «Лина», «Зиган» ятлă ĕнесенчен 15—16-шер литр сĕт суса илнĕ. Çуллахи кунсенче çак ĕнесем 25-шер литр сĕт панă.

Доярка Идеатуллина Хазби юлташ хăйĕн юлташĕ Рабига ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине туйнă. Çак туйăм ăна канăç паман, хастарлăрах ĕçлеме чĕннĕ. Вăл та хăй çумне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 22 литр таран сĕт суса илнĕ.

7 уйăх çурă иртнĕ хыççăн, фермăра ĕçлекенсем хăйсен ĕçĕсене пĕрле пухăнса пăхса тухнă. Ĕçĕн итогĕсем çапла пулнă: октябрĕн 15-мĕшне 39 ĕнерен 40 пин те 4 литр сĕт суса илнĕ. Доярка Идеатуллина Хазби юлташ хăй çумне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 13 пит литр сĕт суса илсе плана ытлашшипех пурнăçланă. Гиннатуллина Рабига юлташ 13.800 литр вырăнне 14.042 литр сĕт суса илнĕ.

Колхоз июнь уйăхĕнчех государствăна сĕт парса татнă.

Колхоз правленийĕ фермăра ĕçлекен работницăсен ĕçне тивĕçлипе хаклана. Çĕнĕ закон тăрăх, Гиннатуллина юлташа ĕçкунĕ çумне хушса 93 литр, Идеатуллина юлташа 123 литр сĕт панă. Ферма заведующине Сабир Закиров юлташа фермăри ĕçе кăтартуллăн туса пынăшăн тата октябрĕн 15-мĕш тĕлне фермăна 25 пин тенкĕ тупăш панăшăн 50 литр сĕт, 1,5 килограмм çăм панă. Сурăх ферминче ĕçлекен Ахматуллин Зариф юлташ 61 путек пăхса ӳстернĕ, 180,5 килограмм çăм касса илнĕ. Çакăнпа ăна правлени 4 килограма яхăн çăм панă.

Ф. МАЙКОВ.

«Марс» колхоз, Елчĕк р.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

ИВПРЕÇ. Районри предприятисенче, промартельсенче, машинно-тракторнăй станцинче колхозсенче аслă уяв умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. МТС коллективĕ хăй çине трактор ĕçĕсен çулталăк планне октябрь уявĕ тĕлне тултарма, тракторсене юсама вырăнти ресурссенчен 1000 тенкĕлĕх запасной пайсем туса хатĕрлеме, вăсăлă узвчен икĕ гусеничнăй трактора юсаса кăларма пулнă.

МТС коллективĕ çак обязательствăсене пурнăçлама тытăннă та ĕнтĕ. Ăмăртăва хутшăннăранпа запасной пайсем 400 тенкĕлĕх ытла туса хатĕрленĕ. Тракторсем юсамалли мастерская юсаса пĕтернĕ. Станоксене вырнаçтарса лартнă. Октябрĕн 18-мĕшĕнче тракторсене юсама тытăннă.

Машинно-тракторнăй станцин агрономĕсемпе служащийĕсем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлеме колхозсене куллен пулăшса пырассĕ. «Красный Октябрь» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçе лайăх организациленĕ. Çак колхозсенчен кашни кун 4-шар лавпа Заготзерно пунктне тырă туртăрассĕ.

Атроном Войвод юлташ «Тымар» тата «Костер» колхозсенче пулса, кĕрхи ĕçсене тума пулăшнă. «Тымар» колхоз октябрĕн 10-мĕшченех клевер çапма тытăнман пулнă. Çак колхозра Войвод юлташ пулнă хыççăн клевера çапса пĕтерсе государствăна вăрлăхне тепĕр парса татнă. Агроном Я. Квасов юлташ «Красный фронтовик» колхозра авăна икĕ сменăпа çапассине организациленĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Рабочисен хастарлăхĕ кунсеренех ӳссе пырать

СЕНТĔРВĂРРИ. Хулари «Парижская Коммуна» артельре ĕçлекен рабочисем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине октябрь уйăхĕн планне 27-мĕш число тĕлне тултарма, пысăк пахалăхлă продукци туса кăларма, ĕç хатĕрĕсемпе ĕç выраннĕсене таса тытма, материалсене перекетлеме обязательство илчĕç.

Илнĕ обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе кашни цехрах ăмăрту сарăлса пырать. Атă çĕлекен цехпа çăматă йăвалакан цехри рабочисем куллен нормăна 170—190 процент таран тултарса ĕçлессĕ. Ватă рабочи Н. Трифонов кулленхи нормăна 180 процент тултарса ĕçленипе ытти рабочисене пример кăтартать. Рабочи Коротков та пысăк пахалăхлă продукци туса кăларать, нормăна 189 процент тултарса пырать.

К. Чучкина юлташăн упăшки фронта кайнă. Упăшкине ăсатнă хыççăнах вăл артеле ĕçлеме пынă. Ĕç техникине хăварт вĕренсе, малтанхи уйăхрах ĕç нормине 173 процент тултарнă. Работницăсем М. Сакина, А. Маркова юлташсем те ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартассĕ. Вĕсем нормăна 170—176 процент тултарса пырассĕ.

Ăмăртăва хутшăннăранпа атă çĕлекенсен цехĕ те начар мар тĕслĕхсем кăтартса пыма пуçларĕ. Уйрăмăнах ку цехри рабочисем ĕç выраннине тирпейлĕ тытма, атă-пушмак çĕлемелли материалсене перекетлеме пуçларĕç. Ученикесем уяв тĕлне хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе çитме панă сăмаха пурнăçлама тăрăшаççĕ.

МИКИШ ПАВАЛĔ.

Паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ

ÇĔРПУ. Районри финанс работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕç. Налог агенчĕсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитацилĕ-массăллă ĕçе вăйлатса пырса, укçа-тенкĕ пухас плана срокчен тултарассĕ.

Шĕнер ялсоветĕнчи налог агенчĕ И. Тарасов юлташ укçа-тенкĕ пухмалли тăваттăмĕш квартал планне 20 кун хушшинче 67,2 процент, Кăшаркасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ П. Ефимов юлташ 47,2 процент, Рындино ялсоветĕнчи налог агенчĕ Соболев юлташ 40 процент пурнăçларĕç.

Уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн хĕрарăм-агентсем лайăх ĕçлеме тытăнчĕç. Иккĕмĕш Вăрманкасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Михайлова юлташ пĕр кун хушшинчех 14 пин тенкĕ укçа пухрĕ. Çавăн пекех Туçи ялсоветĕнчи налог агенчĕ Терентьева юлташ та тăваттăмĕш квартал планне октябрĕн 20-мĕш тĕлне 30 процент ытла тултарчĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.
Районри финанс пайĕн заведующийĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВ ОБОРОНИН ФОНДНЕ

КУКЕÇ. Ĕççыннисем оборона фондне кашни кунах укçа-тенкĕ, ялхуçалăх продукчĕсем хывассĕ. Паянхи куна 25346 тенкĕ укçа, 75.200 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, 241 килограмм аш-какай, 1221 литр сĕт, 11,4 килограмм çу, 137,51 центнер тырă хывнă.

Шăмăшри Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне пĕр ĕне, Туликассинчи «XI лет Чувашии» колхоз 3 сурăх панă. Иккассинчи «1-ое Мая» колхоз 17 центнер тырă панă.

Райсберкасса заведующийĕ Ростов юлташ оборона фондне 2350 тенкĕлĕх облигацисем пачĕ. Çавăн пекех, райфинотдел заведующийĕ Трофимов юлташ 1800 тенкĕлĕх, «Красный конь» колхоз членĕ Мартьянов 750 тенкĕлĕх облигацисем панă.

Тр. ЛОГИНОВ.

Оборудованисемпе тирпейлĕ усă курмалла

Совет инструментальщикĕсем фабрикăсене, заводсене пысăк пахалăхлă инструментсемпе хĕçăпаллантараççĕ. Çĕнĕ инструмент заводран унпа усă куракан предприятисене пырса кĕрет. Кунта ĕнтĕ унăн пĕтĕм пуласлăхĕ унпа мĕнле рабочи ĕçленинчен килет. Оборудованине тирпейлĕ пăхмасан, тивĕçлĕ тасалăхра тытмасан, вăл час-часах ĕçлеме чарăнать. Таса мар, юсавлă мар оборудованипе тата инструментпа усă курни брак туса кăларать. Ахаль мар ĕнтĕ производствăра ĕçлекен рабочисем çапла калаççĕ: «Инструмента курсан, унпа мĕнле çын усă курнине калама пулать», теççĕ.

Оборудованипе тата инструментсемпе тĕрĕс усă курни, вĕсене тирпейлĕ тытăкалани ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пулăшать. Пирĕн предприятисенчи стахановецсем, коммунистсем, комсомолецсем нумайăшĕ хăйсен станокĕсене, инструменчĕсене питĕ те тирпейлĕн тытăкаласçĕ. Çавăнпа та вĕсем, вăл инструментсемпе пĕр чăрмавсăр ĕçлесе, сменăри нормăна 2—3 хут иртерсе е ытларах та тултарассĕ.

Шупашкарти водопроводра ĕçлекен слесарь З. Малинов юлташ хăйĕн инструменчĕсене яланах юсавлă тытать. Вăл ытти рабочисене те инструментсене тирпейлĕ тытса йĕркеллĕ усă курма вĕрентет. Хăй вăл производствăра пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлет. Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ З. Малинов юлташа производствăра кăтартуллă ĕçленĕшĕн хисеплĕ грамота парса наградăларĕ.

Инструментсене тирпейлĕ, хĕрхенсе тытăкалакан рабочисем сахал мар. Автомобильсем юсакан мастерскойĕнче палламалла стахановец-комсомолец Покровский юлташ токарь пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн инструменчĕсене таса тытса усрать. Ĕçре вĕсемпе яланах пĕлсе, тирпейлĕ усă курать. Çапла туни ăна сменăри нормăна 260—300 процент тултарса ĕçлеме пулăшать. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннăранпа Покровский юлташ хăйĕн инструменчĕсене татах та лайăхрах пăхма пуçларĕ. Халĕ вăл октябрь уйăхĕнче плана 500 процент тултарассишĕн тăрăшса ĕçлет. Ăна курса ытти рабочисем те хăйсен инструменчĕсене юсавлă тытма тăрăшаççĕ. Комсомолец Юрченко юлташпа коммунист Румянцев юлташа хăйсен инструменчĕсене тирпейлĕ тыткалани производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пулăшнă. Вĕсем иккĕшĕ те ĕç нормине 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Механически цехри çамрăк работница П. Федорова юлташ хăйĕн инструменчĕсене пăхса усрас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Вăл кунне 50-шар пăт çĕрулми кăларчĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче «Правда» колхозри çамрăк хĕрсем колхоза тăрăшса ĕçлесе ĕçкунĕсем нумай илчĕç. Д. Андреева 323 ĕçкунĕ, Е. Никитина 285 ĕçкунĕ, Е. Ксенофонтова 230 ĕçкунĕ тунă.

Хĕрсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем панă çĕре активлăн хутшăнчĕç. М. Баймулкина пĕр тир, пĕр мăшăр чăлха, пĕр çĕлĕк пачĕ. Настя Сандимиркина çĕлĕк, чăлха, Тамара Козлова сăмса тутри тата чăлха, Зоя Рыбакова пĕр алшăлли пачĕç.

Хальхи вăхăтра колхоз хĕрсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Хăвăртрах авăн çапса пĕтерме тăрăшаççĕ. Кăнтăрла та, каçхине те ĕç вĕрет. Утăм-арпаша сийĕнчех тирпейлесе пырассĕ, тасатса, вирсе хатĕрленĕ тырисене кĕлете ăсатаççĕ.

Кашни бригадăрах молотилка ĕçлет.

3-мĕш бригадăра молотилкăпа сехетне 4 центнер тырă çапассĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

Колхоз хĕрĕсем

— Пирĕн колхоз хĕрĕсем çинчен мĕн каласасси. Пĕр ĕç те вĕсемсĕр пулмасть. Суха тăваççĕ — хĕрсем, утă çуласçĕ — хĕрсем, тырă выраççĕ — хĕрсем, авăн çапаççĕ — хĕрсем, тет Урапакассинчи «Правда» колхоз (Етĕрне р.) председателĕ Ватраскин юлташ, хĕрсем çинчен сăмах хускатсан.

Чăнах та, «Правда» колхоз хĕрĕсем колхоз производствинче те, пур çĕрте те тăрăшса ĕçлеççĕ. Тырра хĕрсем çĕр выртса выртăç. Зоя Рыбакова, Мотя Медведева, Мария Александрова, Паша Моргина 450—500-шер кĕлте вырса нормăна 2-шер хут тултарчĕç. Кантăр татнă, купăста-хăяр шухăш çĕрте те хĕрсемех ĕçлеççĕ. Яшкина 200-шер çурăм кантăр тататчĕ. Яндайкина, Еремеева юлташсем 200—250-шар çурăм татрĕç.

Хĕрсем колхозра ответлă ĕçсенче те ĕçлеççĕ. Манефа Баймулкина—17 çулти çамрăк хĕрача. Ăна Хĕрлĕ Çар рядне кайнă Серебряков вырăнне колхозри 3-мĕш бригадăн бригадирĕ пулма суйласа лартрĕç. Манефа малтанхи кунсенчех тăрăшса ĕçлеме пуçларĕ. Колхозниксене таччăн пĕтĕртрĕç. Пур колхозниксене те явăçтарса, ĕçсене кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа туса, колхозри малта пыракан бригада пулса тăчĕ. Вăл бригадăри колхозниксем хушшинче калаçусем туса ирттерет, хасатсем вуласа парать. Ăна колхозра юратаççĕ.

Мотя Медведева — 2-мĕш бригадăн бригадирĕ, Анна Уткина сысна фермин заведующийĕ пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте хăйсен ĕçне юратса туса пыраççĕ. Хĕрсем специальноçсем илме тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть Марфа Баймулкина трактористсен курсĕнче вĕренсе тухрĕ. Вăл хăйĕн специальноçĕпе мухтанать. Кĕрхи çĕртме тунă чух вăл ĕç нормине 120—150 процент тултарса ĕçлерĕ.

Хĕрсем çĕрулми кăларнă çĕрте те питĕ аван ĕçлерĕç. Ольга Баймулкина, Лидия Ядровкина, Вера Михайлова кунне 0,17-шер гектар çĕрулми кăларчĕç. Уйрăмăнах Чурпай ялсовет депутатки Настя Сандимиркина ытти хĕрсене пример кăтартса ĕçлет. Вăл кунне 50-шар пăт çĕрулми кăларчĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче «Правда» колхозри çамрăк хĕрсем колхоза тăрăшса ĕçлесе ĕçкунĕсем нумай илчĕç. Д. Андреева 323 ĕçкунĕ, Е. Никитина 285 ĕçкунĕ, Е. Ксенофонтова 230 ĕçкунĕ тунă.

Хĕрсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем панă çĕре активлăн хутшăнчĕç. М. Баймулкина пĕр тир, пĕр мăшăр чăлха, пĕр çĕлĕк пачĕ. Настя Сандимиркина çĕлĕк, чăлха, Тамара Козлова сăмса тутри тата чăлха, Зоя Рыбакова пĕр алшăлли пачĕç.

Хальхи вăхăтра колхоз хĕрĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Хăвăртрах авăн çапса пĕтерме тăрăшаççĕ. Кăнтăрла та, каçхине те ĕç вĕрет. Утăм-арпаша сийĕнчех тирпейлесе пырассĕ, тасатса, вирсе хатĕрленĕ тырисене кĕлете ăсатаççĕ.

Кашни бригадăрах молотилка ĕçлет.

3-мĕш бригадăра молотилкăпа сехетне 4 центнер тырă çапассĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

Икĕ сменăпа авăн çапаççĕ

ВĂРНАР. Иртеменкасси колхозĕ Октябрь уявĕччен кĕрхи пур ĕçсене те вĕçлессишĕн кĕрешет. Колхозра халь икĕ сменăпа авăн çапаççĕ. Михайлов комбайнер сменăри плана 150 процент тултарса пырать. Комбайнпа çапнă тырра П. Антоновăпа О. Константинова юлташсем турттарассĕ. Вĕсем те хăйсен нормисене икĕ хут иртерсе тултарассĕ. Барабанщик Алексей Зайцев сменăра икĕ сынпăн ĕçлет. Çавнашкалах улăмури тунă çĕрте ĕçлекен 65 çулхи В. Филиппов юлташ та икĕ сынпăн ĕçлесе пырать.

Колхозăн кăçал тырпул вăйлă пулнă. Вăтам шутпа гектартан 20 центнер тырă тухать. Пуха кĕртнĕ пуян тырпула вĕсем пĕр таккаламасăр çапса пуçтарассишĕн кĕрешеççĕ.

В. КЛЮКОВ.

86 кролик усрать

ШАХАСАН. Ямашри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренекен Василий Белов пĕрремĕш класра вĕреннĕ чухнех кроликсем ĕрчетме юрататчĕ. Кăçал вăл икĕ амаран 86 кролика çитерчĕ. Государствăна пама 30 кролика самăртма хушнă.

Х. ГОРДЕЕВ.

Государствăна—типĕтнĕ çĕрулми

ÇЕМĔРЛЕ. Ку вăхăтчен Егоркинăри «Большевик» колхоз государствăна 500 килограмм ытла çĕрулми типĕтсе панă. Кунçăр пуçне кашни колхозник хăйĕн килĕнче çĕрулми типĕтет. И. Григорьев, В. Мелков колхозниксем пĕрер пăт ытла çĕрулми типĕтсе панă. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз 200 килограмм ытларах çĕрулми типĕтнĕ.

С. БАТЬКОВ.

Шкул ачисен пулăшăвĕ

ЕТĔРНЕ. Палтайри вăтам шкулта вĕренекен ачасем кӳршĕри колхозсене кайса пулăшаççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра вĕренекен ачасем вир, сĕлĕ вырнă çĕрте, авăн çапнă çĕрте тата çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлесе 145 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕсем çине тивекен тупăша оборона фондне панă. Ачасем ĕçе тĕплĕн тума тăрăшаççĕ. Тягушкин, Иванова, Виноградова, Яриндайкина комсомолецсем ĕçрен нихăçан та юлмаççĕ.

Çавнашкалах шкул кӳршĕри «Правда» колхозра 7 ĕçкунĕ, «Борец» колхозра 13 ĕçкунĕ, «Хĕрлĕ сухаç» колхозра 25 ĕçкунĕ ĕçлесе илсе, оборона фондне панă.

В. ЛАЗАРЕВ.

Вкладчиксемпе ĕçлессине авăнлатнă

ИЕПРЕÇ. Районри перекет касси вкладчиксемпе ĕçлессине пĕтĕмпех вăрçă интересĕсене пăхăнтарса туса пырать. Ĕççыннисем хăйсен перекетленĕ укçа-тенкисене перекет кассине хураççĕ.

Халăх хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе куллен сарса пынипе иртнĕ пĕр уйăх хушшинче служащисемпе колхозниксем 26 пин тенкĕ ытла перекет кассине кӳнĕ. Паянхи куна вкладчиксем шучĕ 1225 çын шутланса тăрать.

Перекетленĕ укçа-тенкĕсене перекет кассине хывма кашни кун çĕнĕрен те çĕнĕрен çынсем пырса тăраççĕ. Çак иртнĕ кунсенче М. юлташ хăйĕн перекетленĕ 8.650 тенкĕ укçине, З. юлташ—1.500 тенкĕ, П. юлташ—1000 тенкĕ хыврĕç. М. юлташăн халĕ вклада хывнă укçи 20 пин тенкĕ ытла шутлакать.

— Халĕ государствăна нихăçанхинчен те ытларах укçа кирлĕ. Манăн перекетленĕ укçа-тенкĕ оборона кĕваткине татах та ытларах çирĕплетме, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшĕ. Эпĕ кашни ĕççыннине хăйсен перекетленĕ укçине перекет кассине хывма чĕнетĕп, — тет М. юлташ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Укçа тенкĕ парăмĕсене тӳлесе татрĕç

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз колхозникĕсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен тӳлесе пырассĕ. И. Савельев, Е. Якимова, И. Ефимов, К. Петрова тата ытти колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене çĕр проценчĕпех тӳлесе татрĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

Заем укçине тӳлесе татнă

ÇĔРПУ. Заем укçине пухас ĕç уйрăмăнах колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче аван пырать. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине колхозниксемпе колхозницăсем 32 колхоза пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Ĕççыннисем, заем укçине вăхăтра тӳлесе пынипе пĕрлех, заем облигацийĕсене оборона фондне хывассĕ. Октябрĕн 21-мĕш тĕлне оборона фондне районра 130 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă.

Г. ПЕТРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

мание турттарса кайнă. Румыни халăхĕпе Румыни çарĕ выçă лараççĕ. Тыткăна лекнĕ румын салтакĕсем хăйсен показанийĕсенче салтаксене шитĕ начар ситерни çинчен, час-часах темиçе хунтăр пĕр апат-симĕç илмесĕр ларни çинчен каласа параççĕ. 14-мĕш дивизири тыткăна лекнĕ салтак Костаки допросра çапла каласа панă: «Манăн хал пĕтрĕ. Мана çара илнĕренне эпĕ çаплах выçă пурăнатăп. Вăрăм та халран яракан переходсем тунă хыççăн пире пĕрер татăк тип çăкăр кăна парса пынă». Вилнĕ тата тыткăна лекнĕ румынсем сумĕнче тупнă дневниксенче çавăн пек ӳпкелешсе çырнисем час-часах тĕл пулаççĕ. Акă, Румыни военнослужащийĕн Думитру Попескун, вăрçăра вилнĕскерĕн, дневникĕнчен илнĕ ӳрăм вырăнсем:

«Вырсарникун. Кăнтăрлахи апата илеймерĕмĕр.

Тунтикун. Кунĕпех нимĕн те çимен.

Юнкун. Кунĕпех çимен.

Тунтикун. Апат çимен. Мĕншĕн тесен апат паман.

Ытларикун. Капитан Ангел каçхи апата пама чарнă.

Эрнекун. Кăнтăрлахи апат илеймерĕмĕр, мĕншĕн тесен батальонран апат çук тесе пĕлтерчĕç.

Тунтикун. Апат памарĕç.

Кĕçнерникун. Нимĕн те çимен.

Эрнекун. Нимĕн те памарĕç.

Шăматкун. Нимĕн те илеймерĕмĕр».

Румын юнкерĕ Михаил Олтяну сумĕнче «Вăрçă çинчен çырса пынисем» ятлă хулăм тетрадь тупнă. Олтяну унта хăй тарăхни çинчен çырса пынă. Çав тетрадьрен уйрăм сыпăксене кăтартса паратпăр: «Мĕнпур апат—хура çăкăр. Чи нумай парсан та ăна талăкра 50-шер грамм параççĕ... Акă виççĕмĕш кун ĕнтĕ апат илсе килмеççĕ. Командирсем хăратнипе кăна салтаксем малалла каяççĕ. Офицерсем йĕркелĕхе аран-аран тытса тăраççĕ... Апатсăр та шывсăр маршсем тăватпăр... Выçăхса тата сывăнса çитнипе калаçма та пултараймастăп. Пире нимĕн те çиме памаççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче паттăрăн кĕрешекен Совет партизанĕсен речĕсем кунран-кун ӳссе пыраççĕ. Калинин облаçĕнчи районсен группинче партизансен темиçе отрячĕ кĕрешсе çӳрет. Отрядсем пĕр-пĕринпе тăтăшах сыхăнса тăраççĕ. Октябрĕн пуçламĕшĕнче партизансен пĕрлешӳллĕ вăйĕсем нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă. Ĕç çапла пулса иртнĕ. Малтанах палăртса хунă план тăрăх партизансен пысăк мар ӳрăм групписем тĕрлĕ вырăнсенче фашистсен коммуникацийĕсемпе гарнизонĕсем çине ӳçĕнах пыра-пыра тапăннă. Нимĕçсен влаçĕсем Н. ялĕнчен, çар склачĕсене тата танксемпе автомашинăсем юсамалли мастерскоя сыхлама пысăк мар хурал хăварса, партизансен отрячĕсем тапăну тунă вырăнсене ирĕксĕрех салтаксем янă. Çав вăхăтра патриотсен тĕп вăйĕсем Н. ялĕ çине пырса тапăннă. Вăйлă çапăçура нимĕçсен 41 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем юсама лартнă 17 танка тата 45 автомашинăна çĕмĕрнĕ, боеприпассен, горючипе çар снаряженийĕсен склачĕсене вут тĕртсе çунтарса янă.

Тарăхса кайнă фашистсем партизансене хирĕç пысăк çар чăсне янă. Партизансем, тăшмана шурлăха илĕртсе кĕртсе, çул çинче кĕрсе ӳкмелли лакăмсем тунă, нимĕçсем çине пулеметсемпе автоматсенчен вăйлăн персе тăнă. Наступлени туса килме хăйсен вăйĕсене йĕркелемешкĕн май пулман пирки, фашистсем пĕр йĕркесĕр каялла чакма тытăннă. Çул çинче нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерĕ, çунса кайнă 7 автомашина тата 3 пулемет, 50 винтовка тата ытти снаряженисем выртса юлнă.

Сенатри ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ нейтралитет çинчен калакан закона улăштарма решени йышăннă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америкăн сутуилӳ парохочĕсене хĕçпăшалланта-рас тата вĕсене вăрçа хутшăннă çĕршывсен порчĕсене кĕме ирĕк парас шутпа, сенатри ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ нейтралитет çинчен калакан закона улăштарма ытларах сасăсемпе решени йышăннă.

Нумаях шулмасть представительсен палати нейтралитет çинчен калакан закона улăштарасси пирки законопроект йышăнни çинчен пĕлтернĕччĕ. Çав законопроектра Америкăн сутуилӳ парохочĕсене хĕçпăшалланта-рмашкăн ирĕк пама кăна палăртнă пулнă.

Францире асаплантарса вĕлернисем пирки Рузвельт тунă заявлени

ВАШИНГТОН, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Францире асаплантарса вĕлернисем нумай пулнă пирки президент Рузвельт официальнăй заявлени тунă, çав заявленире вăл Германи фашисчĕсен тискерлĕхне питлет. Президент заявленийĕнче çапла каланă: вăхăтлăха нацистсен ури айне лекнĕ çĕршывсенче нимĕçсем çине уйрăм тапăнусем тунăшăн хĕсĕрлесе айăпсăр вунпар заложниксене вĕлерни пĕтĕм тĕнчене тарăхтарать. Цивилизациллĕ халăхсем тахçанах ĕнтĕ пĕр сын ĕçĕшĕн тепĕр сынна айăпламалла мар текен тĕп принципа пăхăнаççĕ. Çав тапăнусемпе сыхăннă сынсене тупма пултараймаран, нацистсем аллăшар тата çĕршер айăпсăр сынсене вĕлереççĕ, çакă вара вĕсемшĕн питех те паллă пулса тăрать. Кам та пулсан Гитлерпа «кинлĕштерсе ĕçлеме» е ăна лăплантарма пăхас тет пулсан, çавăн пек усал ĕçе хисеп илмесĕр хăварма пултармасть. Иртнĕ вăрçă опытĕнчен сынсен шухăш-кăмăлне террор тунипе хуçма çуккине нацистсем ăнланса илме пултарнă. Çапах та нацистсем ĕлĕкрех хăйсем те нихăçан та туман йĕрĕнмелле тискерлĕхсене туса пынипе хăйсен «лебенсраумне» аталантараççĕ тата «çĕнĕ йĕрке» тăваççĕ. Çаксем вĕсем — хăйсем çĕнтереймееннине чун-чĕрере ăнланса илнĕ, пуласлăха шанмасăр хаярланса кайнă сынсем тунă иресĕр ĕссем. Террор нихăçан та Европăна мир илсе пыма пултараймасть. Вăл тарăху кăна ахать, çак тарăху юлашкинчен питĕ хаярăн тавăрасси патне илсе çитерет.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германин Хĕвеланăç пайĕнчи объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Неаполь хули çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăннă. Хулара иртнĕ çĕрле вĕçсе пырса пăрахнă бомбăсем кăларнă пушарсем çаплах сӳнмен, вăйлăн çуннă. Çĕнĕрен пырса бомбăсем пăрахнипе чугунçул станци районĕнче пушарсем тухнă. Фугаснăй бомбăсем чугунçул линийĕсем çине ӳксе çурăлса кайнă. Пăрахнă бомбăсем станци çуртийĕрĕсем çине тĕл ӳкнине палăртнă. Çав кунах çĕрле йывăр бомбардировщиксем Триполире пароходсемпе порт сооруженийĕсене атакăланă. Фугаснăй бомбăсем мол çине нумай ӳкнĕ. Бомбăсем карапсем çине тĕл пырса ӳксе çурăлни тата хура тĕтĕм мăкăрланса тухни курăннă. Вăтаçĕр тинĕсĕн варринче вăтам бомбардировщиксем противникăн суту-илӳ тумалли пĕр парохочĕ çине бомбăсем пăрахнă тата ăнах пулемет-сенчен пенĕ, парохода пысăк сиен хунĕ. Пĕр бомба пароход палубин çине труба патне ӳкнĕ, ытти сем пароход кăмăл çинче çурăла-çурăла кайнă. Çакăн хыççăн пароход çинче пĕлĕт пек çăра тĕтĕм тата пăс явăнма пуçланă. Англин çак операцисенче пулнă самолочĕсем хăйсен базисене шурте чиперех тавăрăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министерстви октябрĕн 25-мĕшĕнче кăларнă коммюникере çапла каланă: çанталăк япăх пулнă пулин те, Англи бомбардировщикĕсен эскадрильисем октябрĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Рейн облаçĕнчи тата Хĕвеланăç Германин ытти пунктсенчи объекчĕсем çине вĕçсе кайса тапăннă. Çавăн пекех Брестри доксем çине бомбăсем пăрахнă. Октябрĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çыранри авиацин самолочĕсем противникăн Норвеги тата Фриз утравĕсен çыранĕсенче суднăсене атакăланă. Грузсем турттарахан пĕр пысăк пароход çине бомбăсем тĕл ӳкнĕ, парохода сиен туса ун çинче пушар кăларнă. Англи авиацийĕн пĕр бомбăсем пăрахнă тата ăнах пулемет-бомбардировщик пĕтнĕ.

Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 24-мĕшĕнче Тобрук районĕнче противник артиллерийĕ вăйлăн персе тăнă. Çапах та артиллерирен персе тунă материальнăй сиен ӳсăк мар. Халăх хушшинчи жертвăсем пумай мар.

Фронтăн хĕвеланăç секторĕнче Англи патрулĕсенчен пĕри, 9 салтакпа пĕр офицертан тăраханскер, противникăн 30 сынран тăракан патрульпе тĕл пулнă. Противникăн йышĕ пысăк пулнă пулин те, Англи патрулĕ сийĕнчех наступлени тунă, тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Англи патрульнче тăвăтă сын пĕтнĕ. Англин тепĕр патрулĕ противникăн территорийĕ çине шалах кĕрсе кайнă та пилĕк нимĕçе тытăнса илсе тавăрăннă.

Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 24-мĕшĕнче кун лăпкă иртнĕ. Противник Тобрук çине кăна кĕске вăхăт хушши бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнинчен нимĕнле сиен те пулман. Çавăн пекех противник сывлăша-ра та активлăх кăтартман. Чикĕпе юнашар районсенче вырăн разведчиксен групписем çӳренĕ, анчах вĕсем ниçта та тăшмана тĕл пулман.

Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 23-мĕшпе 24-мĕш хушшинче çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Неаполь хули çине виççĕмĕш хуттăн вĕçсе пырса тапăннă. Çанталăк тĕтреллĕ пулни бомбăсем пăрахмалли вырăна хупăрласа тăнă, анчах та малтан икĕ хутчен пырса тапăннипе тухнă пушарсем çаплипех ялкăшса тăнă. Летчиксем вăйлă взрывсем пулнине сăнанă. Бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Триполи хулипе порчĕ çине тата Бенгази гаванĕпе унта тăракан пароходсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бенгазире бомбăсем мол çине лекнĕ те унта пысăк пушарсем пуçланнă. Тинĕс-Çар авиацийĕн противникăн автомобиль транспорчĕ çине тата чикĕ сывăхĕнчи палаткăсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Пулеметсенчен пенипе пушарсем тухнă. Пĕр бомба пароход палубин çине труба патне ӳкнĕ, ытти сем пароход кăмăл çинче çурăла-çурăла кайнă. Çакăн хыççăн пароход çинче пĕлĕт пек çăра тĕтĕм тата пăс явăнма пуçланă. Англин çак операцисенче пулнă самолочĕсем хăйсен базисене шурте чиперех тавăрăннă.

Ташмана Ростов патне ямăпăр!

КАНТАР ФРОНЧĔ, октябрĕн 25-мĕш. **(Телефон тăрăх спец. корр.).** Таганрог хулине тытса илнĕ хыççăн фашистла ордасем Ростов патнелле ыткăнаççăн. Вĕсем темиçе ударлă группа тунă та Дон çинелле кĕрсе каяççăн. Пирĕн оборона çине наступлени тăвасси кунсерен вăйланса пырать. Неприятель хĕснине Хĕрлĕ Çар чăсĕсем паттăрăн сирсе пыраççĕ пулин те, Ростов умĕнчи хăрушлăх ӳсет.

Енĕр фашистсем кункаçиччен пирĕн укрепленисене нумай хутчен атакăланă. Нумай участоксенче тăшманăн пĕчĕк ушкăнĕсем вăрçса тăнă, анчах та пĕр кирлĕрех участокра нимĕçсем 100 танк ытла тата чылай пехота чăсĕсене çапăçăва кĕртсе янă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Тăшман танкĕсем пирĕн оборона ăшнелле кĕрсе кайма хăтланнă, анчах вĕсем çапла хăтланнинче пирĕн укрепленисем вăйлă пулни тата боецсем çирĕп тăни пĕтерсе лартнă. Неприятель атакисене çапса салатнă. Фашистсем çапăçура 12 танк, 6 оруди тата пĕр батальон ытла пехота çухатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче те пирĕн боецсем неприятеле хирĕç активлăн кĕрешеççĕ. Анчах лăпланса ларма юрамасть. Нимĕçсем çĕнĕ вăйсем ярса тăраççĕ. Кĕрешӳ çивĕчленсе пырать. Малта татах та пысăк йывăрлăхсем тăраççĕ. Вĕсене çĕнтерӳллĕн сирсе яма хатĕр пулмалла, Ростов çинелле каякан вырăнсем çинче тăшман çулне пӳлсе лартакан оборона тумалла.

Макеевка районĕнче пирĕн чăссен каллех противник вăйлăн хĕснине чарса тăма тивнĕ. Тăшман атакисене сирсе янă.

(ТАСС).

Ташман хĕсни ӳссе пырать

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 25-мĕш. **(«Правда» хаçатăн военнăй спец. корр.).** Иртнĕ талăк хушшинче Хĕвеланăç фрончĕн кăнтăр участокĕнче противник нумай хутчен малалла шума хăтланса пăхнă, анчах ăнăçлă пулман. Противник Ока çыранĕсем тăрăх чушкаланать, флангсенчен çавăрса илмешкĕн пирĕн оборонăн малти ретĕнче вăйсăртарах вырăн тупасшăн. Çапла хăтланса вăл сарлака шоссе çулĕ çине тухасшăн.

Октябрĕн 24-мĕшĕнче каç пулса килнĕ чух пĕр дивизи чухлĕ çĕнĕ чăсĕсем пирĕн оборона дивизийĕ çине çавăлланса хĕнĕ тата Н. хулин районĕнче пирĕн чăссене хĕснĕ. Фашистла чăсем малалла каяссине пирĕн артиллери вăйлăн персе тата авиаци ĕçĕсемпе чарса лартнă.

Захаркин юлташăн чăсĕсенчи боецсемпе кĕçĕн командирсем çирĕплĕх, хăюлăх тата пуçарулăх кăтартаççĕ. Çапăçусенчен пĕринче рота командирĕ Стебельков лейтенант аманнă. Вăл вăхăтра противник минометсенчен вăйлăн персе тăнă. Хăйсен командирĕ çукшине кура, рота хăрама пуçланă. Корнев красноармеец ротăна командир пулса ертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ. Вăл боецсене наступление ертсе кайнă та, тăшмана каялла ывăтса янă. Мухтава тухнă красноармееца взвод командирне лартнă.

Л. МИТНИЦКИЙ.
М. СИВОЛОБОВ.

Предатель вилĕмĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Çапăçу хĕрӳленсе пынă. Красноармеецсем наступлени тăвакан противника хирĕç хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçнă. Çак вăхăтра предатель, хăравçă Пирожков хăй аллине хăй персе шăтарать. Алли тăрăх ӳн ютнă. Пирожков медпункта çитнĕ. Кунтан вăл госпитале, госпитальрен тыла тухса каймă ĕмĕтленнĕ. Анчах врачсем Пирожков аллинчи суран мĕнле майпа пулнине сийĕнчех туйса илнĕ. Предателĕн малалла каяссине пулман, ăна тӳрĕ кăмăллă красноармеец штыкла винтовкăпа сыхласа тăнă. Ана çавăнтах, вăрманта, фронта тухакан çул çинче пурин куçĕ умĕнче суд тунă. Строй умĕнче старший политрук Малахов сăмах тухса каланă. Строй шăп тăнă, çилĕ тулса çитнĕ хаяр куçсем изменник çине витĕр шăтарса пăхнă. Çак сын,— тенĕ Малахов,—совет çăкăрне çисе ӳснĕ, анчах тăван çĕршыв уншăн ним те мар, вăл совет халăхне сутнă. Хăй çинчен, хăйĕн тирĕ пирки çеç хыпкаланнă вăл. Пирожков тăван çĕршыва сутнă, хăйĕн боевой юлташĕсене, хăйĕн çемьине сутнă. Вăл пирĕн ретсене варалана, хăйĕн ачисен, хăйĕн ашшĕамăшĕн ятне варалана. Строй пĕр чĕнмесĕр тăнă, хаяр шăплăх боецсен ретне хутшăнса кайнă иртĕре çынсем хаярăн курайманнине палăртса тăнă. Комиссар сăмахĕсем—çилĕ тулса çитнипе алăри винтовкăна хытăрах пăчăртаса тытнă кашни боецăн пĕтĕм таса чĕринчен тухакан чăн сăмахсем, пĕтĕм полк сăмахĕсем, шĕтĕм Хĕрлĕ Çар сăмахĕсем пулнă. Комиссар каласа пĕтерсен, стройра тăракан кашни боецăн çирĕп аллисем темле хăйсемех затвор тытăкăчне ярса илнĕ. Анчах малалла пĕр шеренга кăна тухса тăнă. Залп янтраса кайнă. Изменник мĕн кирлине тупнă. **(«ПРАВДА», октябрĕн 26-мĕш).**

Тематикăллă кружок

ÇЕМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Районри парткабинет сумĕнче предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен агитаторсем валли тематикăллă ыйтусем тăрăх кружок организациленĕ. Кружокра 15 çын тăрать.

Унта ялсенче, хулара докладсем, лекцисем, калаçусем ирттерме халăхи вăхăтри ыйтусем тăрăх уйрăм темăсене вĕренеççĕ. Занятисене парткабинет пропагандисчĕсем туса ирттереççĕ. Халлĕхе вĕçĕ заняти пулса иртнĕ. Малтанхи занятире парткабинет заведующийĕ Мосолов юлташ: «Нимĕç фашизмĕ—славянсен ылханлă тăшманĕ» темăпа калаçу туса ирттерчĕ. Çак тема тăрăх материалсемпе лайăх паллашнă хыççăн, кружокри агитаторсем предприятисемпе учрежденисенче калаçусем, докладсем ирттерчĕç.

Сенатри ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ нейтралитет çинчен калакан закона улăштарма решени йышăннă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америкăн сутуилӳ парохочĕсене хĕçпăшалланта-рас тата вĕсене вăрçа хутшăннă çĕршывсен порчĕсене кĕме ирĕк парас шутпа, сенатри ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ нейтралитет çинчен калакан закона улăштарма ытларах сасăсемпе решени йышăннă.

Нумаях шулмасть представительсен палати нейтралитет çинчен калакан закона улăштарасси пирки законопроект йышăнни çинчен пĕлтернĕччĕ. Çав законопроектра Америкăн сутуилӳ парохочĕсене хĕçпăшалланта-рмашкăн ирĕк пама кăна палăртнă пулнă

Францире асаплантарса вĕлернисем пирки Рузвельт тунă заявлени

ВАШИНГТОН, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Францире асаплантарса вĕлернисем нумай пулнă пирки президент Рузвельт официальнăй заявлени тунă, çав заявленире вăл Германи фашисчĕсен тискерлĕхне питлет. Президент заявленийĕнче çапла каланă: вăхăтлăха нацистсен ури айне лекнĕ çĕршывсенче вĕлерни пĕтĕм тĕнчене тарăхтарать. Цивилизациллĕ халăхсем тахçанах ĕнтĕ пĕр сын ĕçĕшĕн тепĕр сынна айăпламалла мар текен тĕп принципа пăхăнаççĕ. Çав тапăнусемпе сыхăннă сынсене тупма пултараймаран, нацистсем аллăшар тата çĕршер айăпсăр сынсене вĕлереççĕ, çакă вара вĕсемшĕн питех те паллă пулса тăрать. Кам та пулсан Гитлерпа «кинлĕштерсе ĕçлеме» е ăна лăплантарма пăхас тет пулсан, çавăн пек усал ĕçе хисеп илмесĕр хăварма пултармасть. Иртнĕ вăрçă опытĕнчен сынсен шухăш-кăмăлне террор тунипе хуçма çуккине нацистсем ăнланса илме пултарнă. Çапах та нацистсем ĕлĕкрех хăйсем те нихăçан та туман йĕрĕнмелле тискерлĕхсене туса пынипе хăйсен «лебенсраумне» аталантараççĕ тата «çĕнĕ йĕрке» тăваççĕ. Çаксем вĕсем — хăйсем çĕнтереймееннине чун-чĕрере ăнланса илнĕ, пуласлăха шанмасăр хаярланса кайнă сынсем тунă иресĕр ĕссем. Террор нихăçан та Европăна мир илсе пыма пултараймасть. Вăл тарăху кăна ахать, çак тарăху юлашкинчен питĕ хаярăн тавăрасси патне илсе çитерет.

Черчилль заявленийĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль ĕнер çакăн пек заявлени пичетлеттерсе кăларнă: Унăн величествин правительстви нацистсем Францире туса пыракан вĕлерӳсем пирки США президенчĕн шиклĕ шухăш-кăмăлĕпе тата вăл питленнипе пĕтĕмпех килĕшет. Айăпсăр сынсене çавăн пек асаплантарнăшăн ун пирки приказ кăларнă тата ăна пурнăçа кĕртнĕ тискер сынсем хăйсене тавăрнине курĕç. Францире вĕлернисем гитлеровецсен пусмăрĕ айĕнче пурăнакан нумай çĕршывсенче вĕсем тăвакан ĕçсен примерĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем — Польшăра, Югославире, Норвегире, Голландире, Бельгире тата пурнăçпа ытла Российăн хăйсем йышăннă районĕсенче тунă тискерлĕхсем халиччен этемлĕх пурнăçĕн чи тĕксĕм тата тискер эпохисенче тĕнче курнисенчен те иртеççĕ. Çаксенчен ĕнтĕ Англипе Америка халăхĕсене Гитлер хăйĕн влаçне илме пултарсан, вĕсене мĕн кĕтартасси курăнать. Çав преступленисемшĕн тавăрасси ĕнтĕ халăхи вăрçăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулса тăмалла.

Виçĕ бельгиеца вĕлерни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, фашистсен «Брюсселер Цейтунг» хаçачĕ виçĕ бельгиеца шпионла ĕç тунă тесе айăпласа вĕлерни çинчен каласа панă.

Бельгире Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельгире вăрттăн тухса тăракан «Либр Бельжик» («Ирĕклĕ Бельгия») ятлă хаçат çакăн пек фактсем нумай кăтартса парать: оккупантсем тăвакан арестсене хирĕç, вĕсем асаплантарса вĕлернине хирĕç бельгиецсем çĕнĕ те çĕнĕ саботажсем туса ответлеççĕ. Саботаж тăвасси çавтери анлăн сарăлнă тата çавтери активланса кайнă пирки, саботажа хирĕç кĕрешмешкĕн нимĕçсем ятарласа уйрăм жандармери тунă. Бельгире халь промышленность рабочийĕсем пĕр миллион та шилĕкĕр пин çын пур. Çав рабочисем пурте хăйсен ĕлĕкхи профсоюзĕсене тĕрĕс пăхăнса тăраççĕ. Нимĕçсем, Бельгири квислинговецсем пулăшнипе çав организацисене фашизм енне çавăрас тесе, тем тĕрлĕ хăтлансан та, ним те тăваймаççĕ. Оккупантсен мероприятийĕсене хирĕç рабочисем стачкăсем туса ответлеççĕ. Ун пек стачкăсем пуринчен ытла юлашки вăхăтра пит нумай пула пуçланă. Уйрăмăнах стачка движенийĕ Боринажри горняксем хушшинче, çавăн пекех тата металлургипе текстиль промышленноçĕнчи рабочисем хушшинче ытла та анлăн сарăлса кайнă. Социалистла профсоюзсен членĕсем вăрттăн политикăллă журнал кăлараççĕ. Ку журналăн тиражĕ Бельгири квислинговецсем кăларса тăракан «Травай» ятлă хаçат тиражĕнчен нумай пысăк.

Голландире Германие хирĕçле выступленисем пулаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Голландире Германие хирĕçле выступленисем палăрмаллах ӳсре пыни çинчен пĕлтереççĕ. Оккупантсем Голланди патриочĕсене хирĕç юнлă террора вăйлатса янă. «Нью-Йорк Уорлд Телеграмм» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтерĕ тăрăх, Лондона пырса çитнĕ голландецсем çапла калаççĕ: нумаях пулмасть нимĕçсем 10 голландеца асаплантарса вĕлернĕ. Вĕсене пĕр пысăк арсенала çĕмĕрнĕ çĕре хутшăлнă тесе айăпланă. Роттердамра саботажла актсем тунипе пĕр грузовой парохода пысăк сиенех тунă. Гаагăра, вут тĕртсе, Германин оккупацилле влаçĕсен нумай документĕсене пĕтерсе тăкнă. Октябрь уйăхĕнче Роттердамра Германин продовольстви управленин çуртне вут тĕртсе çунтарса янă. Голланди хресченĕсем хăйсен выльăх-чĕрлĕхне, нимĕçсен аллине ан лектĕр тесе, пусса пĕтереççĕ.

Германин шыв айĕнчи флочĕн Португали районĕнчи активлăхĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Европăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Португали районĕнче Германин шыв айĕнчи флочĕн активлăхĕ вăйланма пуçланă. Корреспондент сăмахĕсем тăрăх, нимĕçсен подводнăй лодкисен базисем Испани Марокканче тата Каларски утравсем çинче, Германин сывлăш-çар вăйĕсен базисем Испанире, Виго тата Севилья çывăхĕнче вырнаçса тăнă.

Вăрçă пирки тарăхнине уççăнах кăтартса паракансем Берлинра нумайланаççĕ

СТАМБУЛ, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Швейцарири «Газет де Лозанн» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Гитлер Хĕвелтухăçĕнче юлашки татăклă çапăçу сарăлса кайнă тесе капшайса пĕлтернине нимĕçсем нумайшĕшĕсем ĕненмеççĕ. Çав шухăш-кăмăлсене шута илсе, Берлинри радиона хăйĕн сассине кăштах пусарма приказ панă. Халĕ ĕнтĕ радио тăрăх Германи войскисем умĕнче йывăр походсем тата нумай асапсем тăраççĕ тесе калакан пĕлтерӳсене параççĕ. Çапăçусен хаярлăхĕ,—тесе кăтартса парать корреспондент,—салтаксен нервисене хавшатать. Тылри шухăш-кăмăлсем пирки корреспондент çапла çирĕплетсе парать: Берлинра вăрçă пирки çавтери хыттăн тарăхса ятлаçакан тата хăйсем тарăхнине уççăнах кăтартса паракан çынсем нумайланаççĕ. Корреспондент çапла шутлать: Германире вăрçă пирки тарăхса çĕкленекен шухăш-кăмăлсем вăйлансах пыраççĕ, Германи правительстви пек çавтери пысăк хăрушлăх умĕнче тăракан правительство тĕнчере урăх çук. Çав корреспонденцие Женевăна Германи цензуринчен вăрттăн илсе çитернĕ.

Çĕнĕ йышши бомбардировщиксем

ЛОНДОН, октябрĕн 24-мĕш. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин тип çĕр çинчи авиацийĕпе тинĕс авиацийĕ Америкăра конструкциленĕ тата икĕ тĕслĕ бомбардировщиксем часах илет. Пĕри вăл—«Бруствер Берингер» йышши бомбардировщиксем, тепри—«Боуити Венджене». Англи конструкторĕсем «Боуити Венджене» йышши бомбардировщиксем тăвас ĕçре Америка конструкторĕсемпе пĕрле ĕçлеççĕ. «Боуити Венджене» — вăл икĕ вырăнлă машина, ăна тунă чухне çак вăрçă вăхăтĕнче Англи авиацийĕ хăйĕн опычĕ кăтартнă пурнăçлама тăрăшаççĕ. Халь Пăртас ялĕнчи колхозниксем пурте трахома чирĕнчен сыхланаççĕ.

Охтярова юлташ тĕрлĕрен обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнать.

Варшава нимĕçсен аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). АФИ агентствин Стамбулри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Варшавăран килнĕ нейтральнăй çын каланă тăрăх, Варшавăна нимĕç салтакĕсене, Хĕвелтухăç фронтĕнче аманнăскерсене, кунсерен 11.000—14.000 çын илсе пыраççĕ. Шкулсенче, музейсенче, нумайĕш ресторансенче те госпитальсем тунă. Граждăнла халăх Варшавăра нимле медикамент та тупса илме пултараймасть.

Германире хаçатсен шучĕ чакни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаçатăн Берликри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: официальнăй сведенисем тăрăх, Германире тухакан хаçатсен шучĕ 1932 çултипе танлаштарсан халь 50 процент ытла чакнă. Тухакан хаçатсене фашистла влаçсем çирĕп контроль туса тăраççĕ. Халăх хаçатсене вуламасть, мĕншĕн тесен хаçатсенче Геббельс министерствинче туртса кăларнă суя хыпарсене кăна пичетленине пурте лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Трахсестра тăрăшса ĕçлет

ВĂРНАР. Пăртас ялĕнче Александра Охтярова трахсестрара 1937 çултанпа ĕçлет. Пăртас ялĕнче трахома чирĕпе чирлекенсем нумай пулнă. Халĕ вăл чир пĕтсех пырать. Çамрăксенчен трахома чирĕпе чирлекенсем çукпа пĕрех. Охтярова юлташ ялти çынсем патне килĕсене çӳресе трахома чирĕнчен мĕнле сыхланасси çинчен ăнлантарса парать. Вăл вĕрентнине çынсем итлеççĕ, пурне те пурнăçлама тăрăшаççĕ. Халь Пăртас ялĕнчи колхозниксем пурте трахома чирĕнчен сыхланаççĕ.

Охтярова юлташ комсомол организацийĕпе таччăн сыхăнса ĕçлет.

— Комсомол членĕнче кĕнĕренне комсомол организацийĕ мана ĕçре нумай пулăшрĕ, хамăн пĕлĕве те нумай хăпартрăм, — тет Охтярова.

С. ПУДАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7116

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. б. 58 ½ 64 п. л.